27-мӗш çул тухать. Хакӗ 20 пус.

1945
ФЕВРАЛЬ
10
ШАМАТКУН
26(6777) №

Чӑваш Коммуни

Пӗтӗм тӗнчери пролетарисем, пӗрлешӗр!

ВКП(б) ОБКОМӖПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧӖН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧӖН ТАТАШУПАШКАР ХУЛАСОВЕЧӖН ХАÇАЧӖ

Совет Информаци Бюровӗнчен

ФЕВРАЛӖН 8-МӖШӖНЧИ ОПЕРАТИВНӐЙ СВОДКА

Февралӗн 8-мӗшӗнче пирӗн çарсем ХӖВЕЛТУХАÇ ПРУССИРЕ, Кенигсберг хулинчен кӑнтӑртарахра, вӑйлӑ çапӑçнӑ хыççӑн КРОЙЦБУРГ хулине туртса илнӗ. Çавӑн пекех тата ПОРШКАЙМ, ЗЕЕБЕН, БАРТЕЛЬСДОРФ, ВОРКАЙМ, РЕМЕРСВАЛЬДЕ, РАУНАУ, БЮРГЕРВАЛЬДЕ, ФРАУЕНДОРФ, МИЛЛЕНБЕРГ, ОПЕН ялӗсене йышӑннӑ.

ШТАРГАРД хулинчен кӑнтӑр-хӗвелтухӑçнерехре пирӗн çарсем нимӗç Померанийӗнче РЕЕКЦ хулипе БЕРНШТАЙН хулине туртса илнӗ, çавӑн пекех тата, тӑшманпа çапӑçса, халӑх пурӑнакан ытти 100 пункта ытла йышӑннӑ, вӑл шутра—БЕРКЕНБРЮГТЕ, ЛИБЕНОВ, РИТЦИГ, ЗАМЕНТИН, ГОТТБЕРГ ятлӑ пысӑк ялсем. Февралӗн 7-мӗшӗнче ку районра пирӗн çарсем 1.800 нимӗç салтакӗпе офицерне ытла тыткӑна илнӗ.

БРЕСЛАУ хулинчен кӑнтӑр-хӗвелтухӑçнерехре пирӗн çарсем ОДЕР шывӗн хӗвеланӑç хӗрринчи плацдарма аслӑлатасшӑн çапӑçнӑ, КУРЧ, КОХЕРН, ЛОРЦЕНДОРФ, МИХАЙЦ, КЕХЕНДОРФ, ХЕРМСДОРФ, МАРИ ЕНАУ, ВАЛЬДАУ, ТИФЕНЗЕ, ГРОССЗАРЕНЕ ялӗсене туртса илнӗ.

КРАКОВ хулинчен кӑнтӑр-хӗвеланӑçнерехре пирӗн çарсем, сӑртлӑ-вӑрманлӑ вырӑнти йывӑр условисенче кӗрешсе, 40 ял ытла çапӑçса туртса илнӗ, вӑл шутра — ЗАДЗЕЛЕ, ЛЕНКАВИЦЕ, РАХВАЙД, МОШААНИЦА, ЕЛЕСЬНЯ, ПШЫБОРУВ ятлӑ пысӑк ялсем.

БУДАПЕШТРА пирӗн çарсем хулан хӗвеланӑç пайӗнче (БУДАРА) хупӑрласа илнӗ тӑшман гарнизонне пӗтерсе тӑкасшӑн çапӑçнӑ, темиçе квартал туртса илнӗ. Февралӗн 7-мӗшӗнче ку районра пулса иртнӗ çапӑçусенче пирӗн çарсем тӑшманӑн 3.500 салтакӗпе офицерне ытла тыткӑна илнӗ.

Февралӗн 7-мӗшӗнче мӗнпур фронтсенче нимӗçсен 146 танкне çӗмӗрсе тӑкнӑ. Сывлӑшри çапӑçусенче тата зенитнӑй артиллери тӑшманӑн 30 самолетне персе ӳкернӗ.

☆ ☆ ☆

Хӗвелтухӑç Пруссире, Кенигсберг хулинчен кӑнтӑртарахра, пирӗн çарсем çаплах наступлени туса пынӑ. Нимӗçсен Посмор шывӗ патӗнчи оборонин хӑватлӑ узелӗ пулса тӑракан Кройцбург хулишӗн хаяр çапӑçусем пулса иртнӗ. Тӑшман, резервсем куçарса пырса, хытӑ хирӗç тӑнӑ. Совет чаçӗсем Посмор шывӗ урлӑ каçнӑ та гитлеровецсене атакӑланӑ. Паян пирӗн çарсем тӑшман гарнизонне аркатса тӑкнӑ та Кройцбург хулине тытса илнӗ. Тӑшманӑн, вилнисене кӑна шута илсен те, 4.000 салтакпа офицер таран пӗтнӗ.

* * *

Штаргард хулинчен кӑнтӑр-хӗвелтухӑçнерехре пирӗн çарсем çапӑçса малалла куçса пынӑ. Совет пехотинецӗсем, артиллери пулӑшнипе, тӑшман оборонине татнӑ, Реетц хули патне пырса тухнӑ. Пирӗн подразделенисем Реетц хулин хӗвеланӑç хӗрринче юхса выртакан шыв урлӑ каçнӑ та тӑшман гарнизонне хупӑрласа илнӗ. Хаяр çапӑçнӑ хыççӑн пирӗн çарсем шоссе çулӗсен паха узелӗ пулса тӑракан Реетц хулине туртса илнӗ. Ку хула Арнсвальде хулинчен 12 километр çурçӗр-хӗвелтухӑçнерехре ларать. Тепӗр районра пӗр кавалери соединенийӗн чаçӗсем эсэсовецсен пехотнӑй подразделенийӗсенчен тата охраннӑй подразделенийӗсенчен тӑнӑ группировкине çавӑрса илсе пӗтерсе тӑкнӑ. Тыткӑна нумай илнӗ. Автомашинӑсемпе хӗçпӑшал нумай тытса илнӗ.

Кун каçиччен тӗрлӗ участоксенче пирӗн çарсем тӑшманӑн 84 танкӗпе хӑй тӗллӗн çӳрекен туппине персе çӗмӗрнӗ е пӗтерсе тӑкнӑ. Совет зенитчикӗсем тӑшман авиацийӗн атакине сирсе янӑ, нимӗçсен 16 самолетне персе ӳкернӗ.

* * *

Бреслау (Бреславль) хулинчен кӑнтӑр-хӗвелтухӑçнерехре нимӗçсем, пирӗн чаçсене малалла кайма чарасшӑн пулса, контратакӑсем нумай тунӑ. Гитлеровецсем хытӑ хирӗç тӑнине сӗнтере-сӗнтере, пирӗн çарсем çине тӑрсах малалла куçса пынӑ. Тӑшмана Штрелен хулинчен 6 километрта ларакан Лорцендорф ялӗнчен хӑваласа кӑларнӑ. Çавӑн пекех тата ытти ялсем чылай туртса илнӗ. 320 нимӗçе тыткӑна илнӗ.

* * *

Одер шывӗн леш енчи плацдарма аслӑлатасшӑн совет воинӗсем хастаррӑн та паттӑррӑн çапӑçаççӗ. Плаксин капитан командир пулса ертсе пыракан танксен ушкӑнӗ тӑшманӑн вӑйлӑ çирӗплетнӗ позицийӗсене сасартӑк атакӑланӑ. Пирӗн танкистсем гитлеровецсене пӗр рота ытла вӗлерсе пӗтернӗ, 15 пулемет, 3 миномет тата 2 бронетранспортер пӗтерсе тӑкнӑ. 50 нимӗçе тыткӑна илнӗ. Фролов лейтенант ертсе пыракан танк экипажӗ малалла ыткӑнса тухнӑ та, тупӑпа персе тата гусеницӑсемпе таптаса, нимӗçсен обозне тата 80 салтакӗпе офицерне пӗтерсе тӑкнӑ. Гринь старши лейтенант ертсе пыракан хӑй тӗллӗн çӳрекен тупӑ экипажӗ нимӗçсен 4 бронетранспортерне тата хӑй тӗллӗн çӳрекен 4 туппине çӗмӗрсе тӑкнӑ. Пӗр çапӑçура пулеметчик Кузьменко сержант 30 нимӗçе вӗлернӗ. Мельницын ефрейтор, танксене пемелли пӑшалпа персе, çӑмӑл автомашинӑна çӗмӗрнӗ, автомобильтен сиксе тухса тарма хӑтланнӑ нимӗç офицерне персе вӗлернӗ.

* * *

Краков хулинчен кӑнтӑр-хӗвеланӑçнерехре пирӗн çарсем çапӑçса малалла талпӑнса пынӑ. Ленковица тата Мошаница ялӗсенче çирӗпленсе ларнӑ тӑшман хытӑ хирӗç тӑнӑ. Пирӗн гвардеецсем, ту айккисемпе кайса, çав тӗреклетнӗ пунктсене çавӑрса илнӗ те, флангран çав тери хӑвӑрт пырса çапса, нимӗç гарнизонӗсене аркатса тӑкнӑ. Бескид Малы ту хырçин кӑнтӑр айккисемпе хӗвеланӑçнелле куçса пырса, пирӗн çарсем Задзеле ятлӑ пысӑк яла çавӑрса илнӗ. Çав ялшӑн пынӑ çапӑçура совет боецӗсем 170 нимӗçе тыткӑна илнӗ, 26 тупӑ тата ытти трофейсем те тытса илнӗ.

* * *

Украинӑри 1-мӗш фронтра тыткӑна илнӗ нимӗçсен армейски корпус артиллерийӗн начальникӗ Оскар Розен полковник çапла каласа кӑтартнӑ: «Вырӑссем наступлени пуçласа ярсан, эпир хамӑр лару-тӑрӑва часах юсаса яратпӑр пулӗ тесе шутларӑмӑр. Эпӗ пӗлнӗ тӑрӑх, пирӗн командовани вырӑссене хирӗç хӑюллӑ мерӑсем йышӑнма план тунӑччӗ, çав план тӑрӑх, эпир оборонӑра активлӑ çапӑçса, нумай вӑхӑтлӑха тӑмалламччӗ. Нимӗçсен командованийӗ 24-мӗш танковӑй корпуса наступлени туса пыракан Хӗрлӗ Çара пирӗн участокра чарса лартма хушнӑччӗ. Анчах та малтанхи çапӑçусемех çав плансем ним пӗлмесӗр тунӑ плансем кӑна пулнине кӑтартрӗç. Вырӑссем, хӑватлӑн пырса çапса, пирӗн оборонӑна аркатса тӑкрӗç, унтан шалалла кӗрсе кайрӗç те пирӗн штабсемпе тылсене аркатма пуçларӗç. Эпир çынсемпе техника тӗлӗшӗнчен пите йывӑр çухату тӳсрӗмӗр. Вырӑссен наступлени туса пыракан танковӑй чаçӗсемпе мотопехоти пире хыçран таптасах хӑваласа пычӗç, сывлӑш çавӑрса илме те памарӗç».

Мускав облаçӗнчи ял Совечӗсен председателӗсен канашлӑвӗ

М. И. Калинин юлташ тухса калани

Февралӗн 6-мӗшӗнче Мускавра Мускав облаçӗнчи ял Совечӗсен председателӗсен канашлӑвӗ пулса иртнӗ.

Ял Совечӗсен ӗçӗсем çинчен ӗççынни депутачӗсен область Совечӗн исполкомӗн председателӗ Тарасов юлташ доклад туса панӑ.

Канашлура СССР Верховный Совет Президиумӗн Председателӗ М. И. Калинин юлташ сӑмах тухса каланӑ. Канашлура пулнисем ӑна нумайччен алӑ çупса кӗтсе илнӗ. Хӑйӗн сӑмахӗнче Калинин юлташ ял Совечӗсен Отечественнӑй вӑрçӑ кунӗсенчи задачисем çинчен каланӑ.

— Вӑрçӑ,—тенӗ Калинин юлташ,—пӗтӗм вӑя пухма хушать. Совет строй колхозсем Хӗрлӗ Çара чӑннипех пулӑшас тӗлӗшпе пит пысӑк ӗç турӗç. Хӑвӑрах шухӑшласа пӑхӑр-ха: колхозсем пулман пулсан, пирӗн хӗрарӑмсем кашни уйрӑм хуçалӑх тытса пыма пултарӗччӗç-и? Суха-ака ӗçне вӗсем епле тӑвӗччӗç? Уйхир пите ула-чӑла пулнӑ пулӗччӗ. Чипер сухаланӑ анапа юнашарах плуг пырса тивмен анасем пулнӑ пулӗччӗç. Тырпул тухӑçлӑхӗ пите япӑх пулнӑ пулӗччӗ. Колхоз çынсене мӗн тери çӑмӑллӑх панине халӗ суккӑр çын та курма пултарать. Колхозсем пулӑшнипе хресченсем хӑйсем умӗнче тӑракан задачӑсене лайӑх татса параççӗ. Кунсӑр пуçне, революцичченхи тырӑ кӳрсе тӑнӑ облаçсем хальхи вӑхӑтра, тӳррипех калама пулать, ялхуçалӑх продукчӗсем туса илес ӗçре хисеплӗ вырӑн йышӑнчӗç. Ку вӑл—колхозсен чаплӑ ӗçӗ. Тӳррипех калама пулать: колхозниксемпе колхозницӑсем, Хӗрлӗ Çара пысӑк пулӑшу парса, çав тери паха ӗç турӗç. Халӗ те пысӑк ӗç туса пыраççӗ. Çар валли апат-çимӗç боеприпассем пекех кирлӗ.

Çуркунне çывӑхарса килет. Пирӗн ялхуçалӑхӗ пӗр чарӑнмасӑр ӳссе пытӑр тесе, кӑçалхи çуркунне ял Совечӗсен председателӗсем иртнӗ çуркунне туниччен ытларах ӗçлӗç тесе шухӑшлатӑп эпӗ.

Сире, Мускав облаçӗн, ӗлӗк-авал сахал продуктсем тӑвакан область шутланнӑскерӗн, халӗ ялхуçалӑх продукчӗсем тӑвас тӗлӗшпе хисеплӗ вырӑн йышӑннӑскерӗн представителӗсене, çак ӗçе çирӗплетсе хӑварма кӑна мар, ялхуçалӑхне малалла аталантарас ӗçре çӗнӗ çитӗнӳсем тума сунатӑп! (Тӑвӑллӑн алӑ çупаççӗ, пурте ура çине тӑраççӗ).

Канашлу участникӗсем пысӑк хавхаланупа Сталин юлташа салам яма йышӑннӑ.

(ТАСС).

Çуракине большевикла хатӗрленер!

Депутат ертсе пыракан колхоз пример парать

Октябрьски районри «Звезда» колхозра председатель пулса Чӑваш АССР Верховный Совет депутачӗ С. Я. Яковлев юлташ ӗçлет. Колхоз иртнӗ çул пысӑк тухӑçлӑ тырпул туса илчӗ. Государство умӗнчи обязательствӑсене парса татнӑ хыççӑн, 1945 çулшӑн аванс шучӗпе 40 центнер тырӑ панӑ. Планран иртерсе Хӗрлӗ Çар фондне 450 пӑт тырӑ тата 1400 пӑт çӗрулми панӑ. Çакӑн хыççӑн тӗрлӗ фондсене пурне те çителӗклӗ уйӑрнӑ, ӗçкунӗсем тӑрӑх колхозниксене 2.5 килограмм тырӑ, 3 килограмм çӗрулми валеçсе панӑ. Колхозӑн двигатель пур. Кӗркунне çак двигательпе усӑ курса авӑн çапнӑ. Халӗ çӑм таптакан машинӑпа çу çапакан машинӑсене ӗçлеме вӑй парать.

Колхоз выльӑх-чӗрлӗх ӗрчетмелли плана пур выльӑхсем енӗпе те тултарнӑ. Лашасем кунта мӑнтӑр та вӑйлӑ. 13 пӗтӗ кӗсре пур, вӗсене уйрӑмӑн пӑхаççӗ.

Колхозра агрокружок ӗçлет, унта эрнере икӗ хутчен вӗренме пухӑнаççӗ. Вӑйлӑ тырпул туса илес ӗçре вӑрлӑх калама çук пысӑк вырӑн йышӑннине шута илсе, вӑрлӑх участокӗсенчен пухса илнӗ тырра кӗркуннех уйрӑмӑн тасатса хунӑ. Вӑрлӑхӑн шӑтаслӑхне тӗрӗсленӗ. Колхоз председателӗ, бригадирсем тата кладовщик вӑрлӑх мӗнле тӑнине яланах тӗрӗслеççӗ.

Плугсене, сӳресене, сеялкӑсене пӗтӗмпех юсанӑ. Ут таврашӗсем тата транспорт инвентарӗсем те юсавлӑ. Вырӑнти удобренисем хатӗрлес енӗпе те кунта лайӑх ӗçлеççӗ. Удобренисем хатӗрлемелли уйӑхлӑхра «Звезда» колхоз план тӑрӑх 1140 лав тислӗк хире кӑлармаллаччӗ, вӑл 1265 лав кӑларнӑ. 40 лав кӗл, 24 лав кайӑк-кӗшӗк тислӗкӗ хатӗрленӗ. «Звезда» колхозри 1-мӗш бригада уйрӑмӑнах аван ӗçлет. Çак бригадӑна 63 çулхи колхозник Никифоров юлташ ертсе пырать. Унӑн ывӑлӗ фронтра тӑшмана хирӗç çапӑçаççӗ. Кунта хире тислӗк кӑларас ӗçре лашасемпе кӑна мар, тата кӳлсе çӳреме вӗрентнӗ 5 вӑкӑрпа та усӑ кураççӗ.

Колхоза çуракине хатӗрленес ӗçре агитаторсем нумай пулӑшаççӗ. Вӗсем кашни кунах колхозниксемпе колхозницӑсене Хӗрлӗ Çарӑн чаплӑ çитӗнӗвӗсем çинчен ӑнлантарса параççӗ. Агитколлектив руководителӗ пулса Яковлев юлташ ӗçлет. Агитаторсен семинарне час-часах ирттерет.

Анчах та районри ытти колхозсем те çуракине лайӑх хатӗрленеççӗ теме çук-ха. Кӗчкей ял Советне кӗрекен колхозсенче вӑрлӑхлӑх тырӑсене сортласа пӗтермен, плугсемпе сӳресене юсаман. Унта çак вӑхӑта çитсе те тимӗрçӗ тупасси çинчен шухӑшласа пӑхман.

Районра 1.400 плуг юсамалла. Паянхи кун тӗлне 609 плуг юсанӑ, 100 сеялкӑран 79-шне юсанӑ. Триерсем районра 33, анчах та пурӗ те 21 кӑна юсанӑ.

«Звезда» колхоз пек лайӑх ӗçлеме ытти колхозсем те пултараççӗ. Район тата колхоз руководителӗсем пикенерех ӗçлени кӑна кирлӗ. Çуракине хатӗрленес ӗçре колхозпа колхоз, бригадӑпа бригада ӑмӑртса ӗçлемелле.

М. ПРОХОРОВ.

Ут таврашӗсем çителӗклӗ хатӗрленӗ

ТАВАЙ. Чапаев ячӗпе тӑракан колхоз членӗсем вырӑнти удобренисене пухса хире кӑлармалли уйӑхлӑхра аван ӗçлерӗç. Çак уйӑхлӑхра вӗсем 1.620 лав тислӗк хире кӑларчӗç. 95 центнер кайӑк-кӗшӗк тислӗкӗ, 100 центнера яхӑн кӗл пухрӗç.

Кунта уйӑхлӑх иртнӗ хыççӑн та хире тислӗк кӑларма тата ытти удобренисем пухма чарӑнман. Кашни кунах 10—15 лав кӑлараççӗ.

Чапаев ячӗпе тӑракан колхозра çуракине лайӑх хатӗрленеççӗ. Вӑрлӑхлӑх тырӑ çителӗклӗ уйӑрнӑ, вӗсен шӑтас пахалӑхӗ аван. Вӑрлӑхлӑх тырӑсене пӗтӗмпех акт çырса кладовщик аллине панӑ. Вӑрлӑх хунӑ амбарсене хураллама шанчӑклӑ колхозниксене уйӑрнӑ.

Çак колхозра лашасем мӑнтӑр. Вӗсене вӑхӑтра çитереççӗ тата лайӑх пӑхаççӗ. Колхозра суранлӑ е чирлӗ лашасем çук. Хӗл каçма тата çураки вӑхӑтӗнче çитерме çителӗклӗ апат хатӗрленӗ.

Ут таврашсене тата транспорт инвентарӗсене юсаса çителӗклӗ таран хатӗрленӗ. Колхозра 58 çулти тимӗрç Я. Культ юлташ ӗçлет. Вӑл кашни бригадӑна валли 4-шар плуг, 10 сӳре, 2-шер сеялка юсаса хунӑ. Халӗ вӑл ялхуçалӑх машинисем валли запаслӑ пайсем хатӗрлет.

Колхозниксем агрокружокра вӗренеççӗ. Пурӗ 6 заняти пулнӑ, унта 47 çын çӳрет. Кружока колхозри агротехник И. Зайцев юлташ ертсе пырать.

И. ИВАНОВ.

Вӑрлӑх фондне салатса ямалла мар

КУКЕÇ. Çуракинче акса хӑварма кашни колхозӑнах çителӗклӗ таран вӑрлӑх фончӗ пулмалла. Вӑрлӑх фондӗнчи тырра ытти çӗре расходлама юраманни паллӑ. Анчах та Апаш ял Советӗнчи «Трудовик» тата Сарапакасси ял Советӗнчи Буденный ячӗпе тӑракан колхозсен руководителӗсем çакна ӑнланмаççӗ пулас: вӗсем хӑйсен колхозӗнчи вӑрлӑх фондне урӑх çӗре салатма пуçланӑ.

Вӑрлӑхлӑх хӑварнӑ тырӑ таса та сортлӑ пулмалла. Вӑрлӑхсене триерпа сортламалла. Çак ӗçе районри «Осоавиахим», «Правда», «Челюскинец», «Малалла», «Кукшум», «2-ая пятилетка», Молотов ячӗпе тӑракан тата ытти колхозсем те тивӗçлипе туса пыраççӗ. Çак колхозсенче вӑрлӑхсене пӗтӗмпех триерпа тасатнӑ.

Çав вӑхӑтрах Сарапакасси, Паçпак, Чӑкӑр, Хыркасси ял Совечӗсене кӗрекен колхозсенче триерсене ахаль лартаççӗ, ку тарана çитсе те вӑрлӑхсене сортламаççӗ: Хӑшпӗр колхозсенче («Чигирь», «Рикша») триерсене халӗ те юсаман-ха.

А. АЛЕКСЕЕВ.

Яшин юлташ васкамасть

ХЕРЛЕ ЧУТАЙ. Районри нумай колхозсем çуракине лайӑх хатӗрленеççӗ. Кишлӗри «Труженик» колхоз çуракине хатӗр темелле. 16 плуг, 2 сеялка, 18 сӳре, 20 урапа юсанӑ, Вӑрлӑхсем çителӗклӗ, вӗсене сортланӑ, пахалӑхне тӗрӗслеттернӗ. Туртӑм вӑйӗ çитет, лашасемпе пӗрлех вӑкӑрсемпе те çураки ӗçӗнче анлӑн усӑ курма палӑртнӑ. Удобренисем хатӗрлесе хире турттармалли уйӑхлӑхӑн планне колхоз ытлашшипех тултарнӑ.

Çавӑн пекех Чапаев ячӗпе тӑракан, «Путь социализма» колхозсем те çуракине лайӑх хатӗрленеççӗ.

Çак вӑхӑтрах çуракине сӳрӗк хатӗрленекен колхозсем те пур. Васка сырминчи «Новая жизнь» колхоз 190 центнер вӑрлӑх сортлас вырӑнне 23 центнер кӑна сортланӑ. Плугсене, сӳресене тата ытти машинӑсене те юсама тытӑнман, вӗсене пӗр çӗре пуçтарса лартман. Пӗр плуг халӗ те хиртех юр айӗнче тутӑхса ларать, ытти машинӑсем те ӑçта пулнӑ, унтах лараççӗ. Хире 466 лав тислӗк кӑларнӑ тата 15 центнер кӗл, 5 центнер кайӑк-кӗшӗк тислӗкӗ пухнӑ та, çавӑнтах лӑпланса ларнӑ. Райçӗрӗç пайӗн планӗ тӑрӑх, 68 гектар çинче юр тытса хӑвармалла пулсан, пӗр гектар çинче те тытман. Ут таврашсене хатӗрлесси те япӑх пырать. Колхозра вӑрлӑх чылай çитмест. Çӗрулми вӑрлӑхӗ 150 центнер, сӗлӗ 28 центнер, вика 24 центнер çитмест. Вӗсене тупса хатӗрлес тесе нимӗн те туман. Улӑштарса илмелли фонд пулсан та, вӑрлӑх улӑштарса илесси пирки кӳршӗри колхозсемпе калаçман.

Колхоз председателӗ Я. Яшин юлташ çуракине хатӗрленес ӗçре ответлӑха туймасть-ха. Колхозниксемпе колхозницӑсене ку ӗçе мобилизацилемен. Колхоз авӑн çапас ӗçе те халӗ те вӗçлемен.

— Хӗл вӑрӑм-ха, ӗлкӗрӗпӗр,—тесе лӑплантарать Яшин хӑйне хӑй.

«Танкист», «Профинтерн», «Победа» колхозсенче те çуракине начар хатӗрленеççӗ.

П. ТИХОНОВ.

Уя тислӗк кӑлараççӗ

Сӗнтӗрвӑрри районӗнчи колхозсем январь уйӑхӗнче уя 48.524 лав тислӗк кӑларчӗç. 1208 центнер кӗл, 885 центнер кайӑк-кӗшӗк тислӗкӗ пухса хатӗрлерӗç.

«Красная Армия», «Наркомюст» колхозсем уя пиншер лав тислӗк тӑкнӑ. Упакасси ял Советне кӗрекен «Трактор» колхоз 1670 лав тислӗк кӑларнӑ, 27 центнер кӗл, 16 центнер кайӑк-кӗшӗк тислӗкӗ пухнӑ. Уя тислӗк кӑларас тата ытти удобренисем пухас тӗлӗшпе çак колхозсенче халь те тимлӗн ӗçлеççӗ. Тислӗке хире уйрӑм пысӑк купасене тӑкаççӗ.

И. ОСИПОВ.

Выльӑх чирӗпе кӗрешмеççӗ

ХЕРЛЕ ЧУТАЙ. Хӑшпӗр колхозсенче, сӑмахран, Тарабайри «Агроном», Калкасинчи «Самолет», Енкӗлтри «Красный маяк», Хӗрлӗ Чутайри «Профинтерн» колхозсенче, чирлӗ лашасем пур. Çав колхозсен руководителӗсем чирлӗ лашасене сыватас тӗлӗшпе нимӗн те тумаççӗ. Вӗсене сыввисенчен уйӑрман. Вӗсене сыватас тӗлӗшпе ӗçлеме ӑшӑ пӳлӗмсем туман. Чирлӗ лашасене сыватас тӗлӗшпе районри ветеринари лечебници те сахал ӗçлет.

Лашасем колхозсенче тӗп туртӑм вӑйӗ пулса тӑраççӗ. Çавӑнпа чирлӗ лашасене сыватас тӗлӗшпе тимлӗн ӗçлемелле.

А. ШИНЖАЕВ.

Коммунистсен районри отчетлӑ пухӑвӗ

СЕНТЕР. (Хамӑр корр.). Кунта коммунистсен районри отчетлӑ пухӑвӗ пулса иртрӗ. Пуху районри парторганизацин ӗçӗсем çинчен ВКП(б) райком секретарӗн Петров юлташӑн отчетлӑ докладне сӳтсе ячӗ.

Отчетлӑ тапхӑрта, икӗ çул хушшинче, районри парторганизацин пурнӑçӗнче чылай улшӑнусем пулнӑ. Районри коммунистсенчен çурри ытла парти ретне юлашки 2 çул хушшинче кӗнӗ. Çӗнӗрен 8 çӗрте парторганизацисем организациленӗ. Отчетлӑ тапхӑр парти организацисене ертсе пырас ӗçе çӗнӗ çынсем, уйрӑмӑнах хӗрарӑмсем, нумай хутшӑннипе палӑрса тӑрать.

Районри парторганизаци хӑйӗн пӗтӗм ӗçне ӗççыннисене фронта пулӑшма мобилизацилес тӗллевпе туса пынӑ.

Вӑрçӑ вӑхӑтӗнчи йывӑрлӑхсене пӑхмасӑрах, районри колхозсем иртнӗ çул хушшинче ялхуçалӑх ӗçӗсене ӑнӑçлӑн ирттернӗ. Вӑрçӑ пуçланнӑ хыççӑн тырпул тухӑçӗ çулсерен çулах ӳссе пынӑ. 1942 çулта районри колхозсем вӑтам шутпа кашни гектартан 9 центнертан та каярах тырӑ туса илнӗ пулсан, 1943 çулта—11,5 центнер, 1944 çулта вара 12,5 центнер туса илнӗ. Уйрӑмӑнах «Çӗнӗ Юнга», «Колос» колхозсенчи тата Кӑпасри, Юнгӑри территориллӗ пуçламӑш парторганизацисем ялхуçалӑх ӗçӗсене лайӑх ертсе пыраççӗ. Çавна пула вӑл колхозсем çитес çуракине те тӗплӗн хатӗрленеççӗ.

Коммунистсен пухӑвӗ районри чылай промартельсем лайӑх ӗçленине палӑртрӗ. Районри промкомбинат, апат-çимӗç комбиначӗ, «Дружба», «20 лет Чувашии», «Кожевник» тата «Производственник» артельсем иртнӗ çулта производствӑллӑ плана срокчен тултарнӑ.

Вӑрçӑпа хуçалӑх тӗлӗшӗнчи задачӑсене ӑнӑçлӑн пурнӑçласа пыма, пӑлхах, ӗççыннисем хушшинче массӑллӑ-политикӑллӑ ӗçе туса пыни нумай пулӑшать. Иртнӗ çулта колхозсенче 300 агитатор ытла ӗçленӗ. Шупуçӗнчи, Апчарти «Колос», Пушкӑртри «Новый путь» колхозсенчи агитколлективсем лайӑх ӗçленине палӑртмалла.

Юлашки вӑхӑтра партипе совет активӗн, колхоз кадрӗсен политикӑллӑ пӗлӗвне ӳстерес тӗлӗшпе чылай ӗçсем туса ирттернӗ. Районра каçхине вӗренмелли политикулсем 8 çӗрте организациленӗ, вӗсенче 149 çын вӗренет. Марксизм-ленинизм теорине хӑйсем тӗллӗн вӗренекенсем валли 154 лекци туса панӑ.

Çакӑнпа пӗрлех коммунистсен пухӑвӗ районри парторганизацин ӗçӗнчи çитменлӗхсене те палӑртрӗ. Парти ретне ӳстерес тӗлӗшпе начар мар ӗçленӗ, анчах çамрӑк коммунистсене политикӑллӑ воспитани парас ӗçе çителӗксӗр йӗркеленӗ. Çавна пула парти кандидачӗсенчен чылайӗшӗсем члена кӗме вӑхӑтра хатӗрленсе çитеймеççӗ. Хальхи вӑхӑтра стаж тухнӑ кандидатсем 44 шутланаççӗ. Районра çитес çуракине хатӗрленес ӗç çителӗксӗр пулса пырать-ха. Колхозсен, пӗтӗмӗшпе илсен, вӑрлӑхсем çитеççӗ, анчах вӗсене сортласа тасатассине тивӗçлипе организацилемен. Çавӑн пекех ялхуçалӑх машинисене тата транспорт инвентарӗсемпе лаша кӳлмелли хатӗрсене юсассине те чылай çӗрте тивӗçлипе организацилемен.

Коммунистсен пухӑвӗ МТС çуракине çителӗксӗр хатӗрленнине палӑртрӗ. Февралӗн 1-мӗшӗ тӗлне 26 трактор юсамалла пулнӑ пулсан, 15 трактор çеç юсанӑ. МТС ӗçӗсем пирки ВКП(б) райкомӗн бюровӗнче те чылай сӳтсе-явнӑ. Анчах МТС директорӗ Чупраков тата унти пуçламӑш парторганизацин секретарӗ Аргандеев юлташсем ВКП(б) райкомӗн решенийӗсене пурнӑçа кӗртмен-ха.

Выльӑх-чӗрлӗх ӗрчетес тӗлӗшпе 1943 çулта район пысӑк çитӗнӳсем турӗ. Ун чухне плана пур выльӑхсем енӗпе те ирттерсе тултарнӑ. Анчах 1944 çулта вара ку тӗлӗшпе ӗçсем пачах урӑхла. Чылай колхозсенче выльӑхсен шучӗ ӳсес вырӑнне чакни палӑрать. Район иртнӗ çулта пӗр выльӑх енӗпе те плана тултарман.

Пуху чугун çул транспорчӗ валли вутӑ хатӗрлес тӗлӗшпе район çителӗксӗр ӗçленине палӑртрӗ. Райсовет исполкомӗ тата партипе советӑн вырӑнти организацийӗсем çак ӗç валли ӗç вӑйӗ çителӗклӗ мобилизацилемен, вӑрманта ӗçлекенсем хушшинче политикӑллӑ ӗçе çителӗклӗ туса пыман.

Коммунистсен районри пухӑвӗ районри парторганизаци умӗнче тӑракан практикӑллӑ задачӑсене палӑртса решени йышӑнчӗ.

А. СОЛОВЬЕВ.

Комсомолӑн отчетпа суйлав пухӑвӗсен решенийӗсене пурнӑçлар

Комсомолӑн Йӗпреç районӗнчи пур организацийӗсенче те отчетпа суйлав пухӑвӗсем пулса иртрӗç. Малтанах лайӑх хатӗрленнине пула нумай организацисенче пухусем йӗркеллӗ пулчӗç. Комсомолецсем отчетлӑ докладсене активлӑн сӳтсе-яврӗç, çитменлӗхсене хӑюллӑн критиклесе, вӗсене пӗтерме сӗнӳсем пачӗç.

Отчетпа суйлав пухӑвӗ уйрӑмах Йӗпреçри вӑтам шкулти организацире (секретарӗ Нестерова юлташ) аван иртрӗ. Çав организаци хӑйӗн ӗçне яланах план тӑрӑх туса пынӑ. Комсомолецсем вӗренӳ пахалӑхне хӑпартас тата дисциплинӑна çирӗплетес ӗçре шкул дирекцийӗпе, учительсемпе лайӑх çыхӑнса ӗçлеççӗ. Нумай комсомолецсем, пур предметсемпе те лайӑх паллӑ илсе, ытти вӗренекенсене пример кӑтартса пыраççӗ. Вӗренӳре ӗлкӗрсе пырайман е дисциплинӑна пӑсакан комсомолецсем çинчен пухусенче сӳтсе-яваççӗ, кирлӗ чухне пулӑшу параççӗ. Кунта çамрӑксене комсомол ретне илес ӗçе те лайӑх йӗркеленӗ. Иртнӗ çулта комсомол ретне 50 çамрӑка илнӗ.

Çавӑн пекех «Молния» колхозри комсомол организацийӗ те (секретарӗ Иванова юлташ) лайӑх ӗçленине палӑртмалла. Кунта çулталӑк хушшинче 13 çамрӑка комсомола илнӗ. Комсомолецсем ялхуçалӑх ӗçӗнче хастаррӑн ӗçлеççӗ. Тырӑ вырнӑ вӑхӑтра комсомолецсемпе çамрӑксем ятарласа фронтовой бригада тунӑ. Вӗсем эрнипе, каçхине те киле таврӑнмасӑр ӗçлесе, 50 гектар çинчи тырра вырса пуçтарнӑ. Çак бригада ытти ӗçсенче те хастар ӗçленӗ. Халӗ вӗсем çитес çуракине тӑрӑшса хатӗрленеççӗ. С. Орлов, Г. Ермолаев, А. Иванов комсомолецсем уя тислӗк кӑларас тата кайӑк-кӗшӗк тислӗкӗпе кӗл пухас тӗлӗшпе ӗçлеççӗ. Комсомолецсем агротехникӑна вӗренме тата хӑйсен политикӑллӑ пӗлӗвне ӳстерме кружоксем организациленӗ.

Отчетпа суйлав пухӑвӗсенче хӑшпӗр организацисем начар ӗçлени палӑрчӗ. Молотов ячӗпе тӑракан колхозри пуçламӑш организаци пачах та çителӗксӗр ӗçленӗ. Комсомолецсем колхоз ӗçне начар хутшӑннӑ, ытларах çӑмӑл ӗçсене вырнаçма тӑрӑшнӑ. Колхоз ялхуçалӑх ӗçӗсене вӑхӑтра туса пыраймасть, выльӑх-чӗрлӗх ӗрчетес тӗлӗшпе те юлса пырать. Кунта çитес çуракине начар хатӗрленеççӗ, вӑрлӑх çитмест, вырӑнти удобренисене пухмаççӗ. Апла пулин те комсомолецсем колхоз ӗçӗпе интересленмеççӗ, хуçалӑхпа çыхӑннӑ ыйтусене комсомолецсемпе çамрӑксен пухӑвӗсенче сӳтсе-явмаççӗ.

Кунта отчетпа суйлав пухӑвне те кирлӗ пек хатӗрленмен. Пухӑва 12 комсомолецран 9-шӗ çеç пынӑ, ӗçне кура отчетне те начар хатӗрленӗ. Отчет тӑрӑх икӗ çын кӑна тухса каланӑ. Организаци ӗçне тӗплӗн тишкерни, çитменлӗхсене палӑртса, вӗсене пӗтерме сӗнӳсем пани пулман.

Отчетпа суйлав пухӑвӗсем комсомол организацийӗсен ӗçӗсене пӑхса тухма, комсомол ӗçӗнчи çитменлӗхсене пӗтерме майсем туса пачӗç. Пухусем йышӑннӑ решенисене çывӑх вӑхӑтрах пурнӑçа кӗртсе, комсомол ӗçне тӗпрен лайӑхлатмалла.

П. КУРАКОВ.

Чугун çул çинчи тата Çулйӗр Халӑх Комиссариачӗн завочӗсенчи работниксене СССР орденӗсемпе медалӗсене парса наградӑлани

СССР Верховный Совет Президиумӗн Указӗ тӑрӑх, Оборонӑн Государственный Комитечӗ панӑ заданисене ӑнӑçлӑн пурнӑçа кӗртнӗшӗн чугун çул çинчи тата Çулйӗр Халӑх Комиссариачӗн завочӗсенчи работниксен пысӑк ушкӑнне СССР орденӗсемпе медалӗсене парса наградӑланӑ. Вӗсем хушшинче Канашри вагонсем юсакан заводри работниксем те пур. Вӑл заводри слесарьсен бригадин бригадирне И. С. Журба юлташа Хӗрлӗ Çӑлтӑр орденӗпе, электросварщиксен бригадирне В. А. Алексеев юлташа «Ӗçре палӑрнӑшӑн» медальпе наградӑланӑ.

ВЦСПС-па СССР Хатӗрлев Халӑх Комиссариатӗнче

Хатӗрлев организацийӗсен Пӗтӗм Союзри социализмлӑ ӑмӑртӑвӗн 1944 çулхи ноябрь уйӑхӗнчи итогӗсене пӑхса тухса, ВЦСПС-па СССР Хатӗрлев Халӑх Комиссариачӗ Пӗтӗм Союзри ӑмӑртура виççӗмӗш вырӑн йышӑннӑ Красноармейски райони (райуполнаркомзаг Яковлев юлташ) укçан премине пама йышӑннӑ.

ВЦСПС-па СССР Наркомзагӗ Çӗрпӳ районӗ (райуполнаркомзаг Виноградов юлташ) лайӑх ӗçленине палӑртнӑ.

Укерчĕк çинче: Сергеевсен çемьи. Сулахайра—летчик Вениамин Александрович Сергеев лейтенант, сылтăмра — Александр Александрович Сергеев майор, ăна Хĕрлĕ Çăлтăр орденĕпе Отечественнăй вăрçăн II-мĕш степень орденĕ тата «За боевые заслуги» медаль парса наградăланă. (Вĕсем çинчен «Пĕр çемьери ывăл-хĕрсем» ятлă очерка вулăр).

Пĕр çемьери ывăл-хĕрсем

Отечественнăй вăрçă фрончĕсенче нимĕç тискер кайăкне хăйĕн йăвинчех пĕтерсе тăкассишĕн чăваш халăхĕн нумай пин ывăл-хĕрĕсем паттăррăн çапăçаççĕ. Вĕсен пархатарлă ĕçĕ çинчен чăваш ĕçсыннисем патне çырусемпе пĕлтерÿсем кунсеренех нумай килеççĕ. Акă пĕр çыру.

... Тăшман салтакĕсем хăйсене активлă. рах тытаççĕ: пулеметсенчен пĕр вĕçĕмсĕр персе тăраççĕ, траншейăсем тăрăх каллĕ-маллĕ чупаççĕ. Мĕн пулнă, тен, çĕнĕ пополнени килнĕ е часть улшăннă? Çак ыйтăва «чĕлхе» илсе килсен кăна ăнăçлăн татса пама пулать, анчах пирĕн участокра «чĕлхе» тытма питех те йывăр. Нимĕçсем хăйсен позицийĕсене лайăх çирĕплетнĕ, вĕсем, тÿрем вырăнпа усă курса, эпир мĕн тупине пĕтĕмпех курса тăма пултараççĕ.

Çапах та приказа кирек мĕнле пулсан та пурнăçа кĕртмелле.

— «Чĕлхе» пулать,—терĕ разведчиксен командирĕ Сергеев Александр,—илсе килĕр-ха нимĕçсенчен тытса илнĕ тола тата пĕр пичке.

Эпир толпа пичке мĕншĕн кирлине ăнланмасăр пĕр-пĕрин çине пăхса илтĕмĕр, анчах приказа пурнăçларăмăр. Кун хыççăн Сергеев пире пичкене тол тултарса, ăна çунакан шнурпа çыхăнтарма хушрĕ. Эпир çак приказа та пурнăçларăмăр.

Пĕр çĕрте пирĕн позицисем çĕртлĕ вырăнтаччĕ, нимĕçсен позицийĕсем вара пире хирĕçле айлăм вырăнтаччĕ. Сергеев юлташ çавăнпа усă курма шутланă иккен. Тĕттĕм пулсан, пичкене тăвайкки хĕрне йăвантарса тухрăмăр та, шнура чĕртсе ярса, аялалла кустарса ятăмăр. Пичке хăнтăр-татса тăшман траншейисем патне йăванса кайрĕ.

Нимĕç часовойĕ, хăранипе, пĕтĕм вăйран: «Хальт» тесе кăшкăрса ячĕ. Темле вăйлă кăшкăрни те пулăшмарĕ, пичке хăнтăртатса пĕрмай малалла каять. Гитлеровец, хыпăнса ÿксе, вырăсла: «Стой, кто идет» тесе те кăшкăрса пăхрĕ. Çапах пичке ăна итлемерĕ. Нимĕçсем вара кускалама пуçларĕç...

Çав самантра пысăк тупăран пенĕ чухнехинчен те вăйлăн янтранă сасă илтĕнчĕ. Сывлăш хумĕ пирĕн траншейăсем патне 200 метра ытла çитрĕ. Çакă вара пирĕншĕн сигнал пулчĕ. Сержант Мясный, рядовойсем Ломоносов, Соколов, Бердников юлташсем нимĕçсен траншейисене вăркăнса кĕчĕç.

Нимĕçсем хăраса ÿкнипе разведчиксем çине пĕр хутчен те переймерĕç. Юнашар траншейăсенчи фрицсем те пулеметсемпе автоматсене пăрахсах тарнă. Разведчиксем приказа пурнăçланă хыççăн хăйсен чăсне таврăнчĕç.

Тăна кĕнĕ хыççăн вара нимĕçсем хăйсен малти ретри позицийĕсем çине артиллерипе пулеметсенчен персе тăма пуçларĕç. Анчах вăхăтра ĕлкĕреймерĕç. Пирĕн разведчиксем ун чухне хамăр подразделенире пулнă...

Ку çырăва Мухтав орденĕн кавалерĕ тата «За отвагу» медальпе наградăланă сержант А. Кайгородов юлташ çырнă. Унта вăл чăваш çамрăкĕн Александр Сергеевăн чеелĕхĕ тăшман вăйне çĕнтерни çинчен каласа парать. Вăрçă фрончĕсенче Сергеев юлташ хăйĕн паттăрлăхĕпе хастарлăхне пĕр хут кăна мар кăтартса панă. Вăрçăра вăл 1941 çултанпа çапăçать. Çав хушăра майор ятне илме тивĕçлĕ пулнă. Çĕнтерÿ çулĕ ăна Польша çĕршывне илсе тухнă. Халĕ Сергеев юлташ, Хĕрлĕ Çарăн, хăйĕн тăванĕсемпе юлташĕсен чысне çÿлте тытса пырса, Польша çĕрĕ тăрăх тăшман йăви патне пырса тухнă. Александр Сергеев кăкăрĕ çинче паттăрлăхпа хăюлăх паллисем—Хĕрлĕ Çăлтăр орденĕпе Отечественнăй вăрçăн II мĕш степень орденĕ тата «За боевые заслуги» медальпе «За отвагу» медальсем йăлкăшаççĕ.

Александр Александрович Сергеев çуралса ÿснĕ çемье сакăр ывăл-хĕр пăхса çитĕнтернĕ. Вĕсенчен виççĕ ывăлпа пĕр хĕрача халĕ вăрçă фрончĕсенче тăшмана хирĕç çапăçаççĕ. Александр—майор, Вениамин—летчик, Леонид—радист тата Валентина—медицина сестри. Тăшмана хирĕç çапăçнă çĕрте паттăрлăхпа хăюлăх кăтартнăшăн Леонидпа Валентинăна «За боевые заслуги» тата «За отвагу» медальсем парса наградăланă.

Нумай пулмасть, Леонид Сергеев ашшĕпе амăшне хăйĕн тăван пиччĕшĕпе Александр Сергеевпа фронтра тĕл пулни çинчен хумханса çырса пĕлтернĕ. Вăл хăйĕн çырăвне çĕнтерĕвĕн çутă кунĕ çывхарса килни çинчен каланă сăмахсемпе вĕçленĕ. «Пире кĕтме ан пăрахăр, эпир часах çĕнтерÿ туса таврăнăпăр», тенĕ вăл. Фронтри ытти ывăл-хĕрĕсем те Александр Сергеевичпа Христина Ивановна патне кунсеренех çĕнĕ те çĕнĕ савăнăçлă хыпарсем пĕлтереççĕ. «Халĕ канатпăр-ха,—тесе çырать Александр,—часах, акă, Берлина штурмлама тытăнатпăр. Ун чухне вара эсир те Мускавăн çĕнтерÿ салютне илтĕр».

Тылра пурăнакансем те хăйсен фронтри тăванĕсене ĕçпе пулăшма тăрăшаççĕ. Кузьма Сергеев, Томскри ялхуçалăх институтĕнчен вĕренсе тухнă хыççăн, Алтайри пĕр трестра экономист пулса ĕçлет. Хăйĕн ĕçне лайăх туса пынăшăн ăна СССР Совхозсен Халăх Комиссариачĕ Хисеплĕ грамота парса наградăланă. Анфиса Сергеева Шупашкарти метеорологи станцинче, Петр Сергеев Якутскри пĕр метеорологи станцинче ĕçлеççĕ. Александр Сергеевич Сергеев хăй, 50 çултан иртнĕскер, «Растканчукăн» Чăваш республикинчи конторинче ĕçлет.

Хăйсем пăхса ÿстернĕ ывăл-хĕрсем вăрçă хирĕсенче паттăррăн çапăçни тата тылра хĕрÿллĕн кĕрешни Александр Сергеевичпа Христина Ивановнăна савăнтараççĕ. Вĕсен ывăл-хĕрĕсен пархатарлă ĕçĕсем нимĕç тискер кайăкне хăйĕн йăвинчех аркатса тăкма пулăшаççĕ.

М. БОГДАНИН.

Вăрман хатĕрлевĕнчи фронтри пек ĕçлемелли уйăхлăх

Ятарласа бригадăсем организацилеççĕ

КУСЛАВККА, февралĕн 9-мĕшĕ. (Телефонпа). Туканаш ял Советĕнчи колхозсем иртнĕ çулта чугун çул валли вутă хатĕрлес тĕлĕшпе хăйсен планне ăнăçлăн тултарса пырайман.

Кăçал вара вăрман хатĕрлев планне вăхăтра тултарас тесе ятарласа бригадăсем организацилерĕç. «Канаш» колхозра çав бригадăна Л. Фиклаева, «Коммунист» колхозра А. Ацмалкин юлташсем ертсе пыраççĕ. Вĕсем ертсе пыракан бригадăсем юлашки 10—15 кун хушшинче колхозăн заданине пĕтĕмĕшпех пурнăçа кĕртрĕç. Çакăн хыççăн та вĕсем çаплах вăрманта ĕçлеççĕ.

М. ОГОРОДНИКОВ.

Квартал планне ирттерсе тултарнă

КРАСНОАРМЕЙСКОЕ. Хĕрлĕ Çара стахановла ĕçпе пулăшас тесе, Карай ялсоветĕнчи Войков ячĕпе тăракан колхоз колхозникĕсемпе колхозницисем чугун çул транспорчĕ валли вутă хатĕрлес тĕлĕшпе ывăнма пĕлмесĕр ĕçлеççĕ. Колхозăн 1945 çулхи пĕрремĕш кварталта 460 кубометр вутă хатĕрлесе турттармалла, вĕсем февралĕн 5-мĕшĕ тĕлне 500 кубометр хатĕрлесе, 583 кубометр турттарнă.

Вутă хатĕрлесе турттарас ĕçре уйрăмах Х. Алексеев, М. Хлебнова, И. Софронов, Е. Краснова тата Е. Нестерова колхозниксем тăрăшса ĕçлеççĕ. Колхоз вĕсем валли апат-çимĕç, лашасем валли выльăх апачĕ вăхăтра парса тăрать.

А. ВАСИЛЬЕВА.

Хĕрлĕ Çар кунĕ тĕлне плана тултаратпăр

ЧУРАЧАК, февралĕн 9-мĕшĕ. (Телефонпа). Колхоз председателĕсемпе ял Совет председателĕсен канашлăвĕ пулса иртрĕ. Унта чугун çул валли вутă хатĕрлесе турттармалли плана пурнăçа кĕртесси çинчен сÿтсе-яврĕç. Çав плана февралĕн 15-мĕшĕ тĕлне пурнăçа кĕртме йышăнчĕç. Районран халĕ, вăрманта ĕçлекенсемсĕр пуçне, тата 65 çын, 40 лав уйăрса яма пултăмăр.

Уйрăм колхозсем, сăмахран, «Красное Сормово», «Новая сила», Молотов ячĕпе тăракан колхозсем, хăйсене панă заданине февралĕн 12-мĕшĕ тĕлне тултарма пулчĕç. Вĕсем вăрманта ĕçлеме ĕç вăйĕпе турттăм вăйĕ çителĕклĕ панипе пĕрлех, ĕçе ертсе пыма бригадăсем уйăрса янă.

„Вăйлă тырпулшăн" хаçат 10 çул тухать

1945 çулхи февралĕн 10-мĕшĕнче Шăхасан районĕнчи «Вăйлă тырпулшăн» хаçат тухма пуçлани 10 çул тултарать.

Çак çулсем хушшинче районри хаçат сахал мар ÿсĕмсем тунă.

Шăхасан районĕ—ялхуçалăх районĕ. Çавăнпа та районри хаçат хăйĕн страницисенче ялхуçалăх ыйтăвĕсем çинчен ытларах çырать. Хаçат предприятисемпе колхозсен, учрежденисемпе шкулсен ĕçне вăйлатас, ĕçсыннисен пурнăçпа йăла условийĕсене лайăхлатас ыйтусене çутатса пырассине те манăçа хăвармасть.

1944 çулта хаçат малта пыракан колхозсемпе бригадăсен, стахановецсен опычĕсем çинчен анлăн çутатса пынă. Колхозниксене тухăçлăн ĕçлеме вĕрентнĕ. Çакăн пек материалсем кăна иртнĕ çулта хаçатра 53 материал ытла пичетленĕ. Ку вăл хаçат ялхуçалăх специалисчĕсемпе çыхăнса ĕçленине пĕлтерет. Хаçата ялхуçалăх специалисчĕсем 13 çын, стахановецсем 24 çын, опытниксем 8 çын çырса тăраççĕ. Ухман ял Советĕнчи «Победа» колхозра кок-сагыз ăнса пулнă. Михайлов юлташ ертсе пыракан звено гектартан 13,2 центнер кок-сагыз тымарĕ, 41 килограмм вăрă туса илнĕ. «Новая жизнь» колхозра гектартан 24 центнер урпа туса илнĕ. Çак колхозсен ĕç опычĕ çинчен районри хаçат тĕплĕн çутатса пынă. Иртнĕ çулта районра 7 колхоз, 21 бригада гектартан сĕтшер пăт, 18 колхоз 84—95-шер пăт тĕштырă туса илнĕ. Çак колхозсен ĕç опычĕ çинчен те районри хаçатра çырнă. Выльăх ĕрчетес ĕçне ÿстерес, вĕсене тĕрĕс тăрантарас, ăшă та лайăх витесенче тытса усрас ыйтусемпе зоотехниксен сĕнĕвĕсене тăтăшах хаçатра пичетлесе пынă.

Хаçат колхозсенчи стена хаçачĕсене те тивĕçлипе пулăшса пырать. Иртнĕ çулта кăна районри хаçатра ĕçлекенсем 43 колхозра пулса, вĕсене стена хаçачĕсем кăларма пулăшнă. Кунсăр пуçне, вырăнти хаçатсене тишкерсе тухса вĕсем çинчен районри хаçатра çырнă. Кун пек статьясем пурĕ 16 хутчен пичетленнĕ. Çапла пулăшса пынине пула, районри нумай колхозра стена хаçачĕсем тухса тăраççĕ.

Районри хаçатăн вăйĕ—массăпа çыхăнса тăнинче. Шăхасан районĕн хаçачĕ ĕçсыннисен ыйтăвĕсене вăхăтра çĕклеме, вĕсен ыйтăвĕсене çийĕнчех тивĕçтерме тăрăшать. Çавăнпа хаçатăн авторитечĕ те пысăк, ăна ĕçсыннисем юратаççĕ. Хаçата çыракансен йышĕ те ÿссех пырать. Корреспондентсен йышĕ 189 çын шутланать. Коммунистсем хаçата активлăн хутшăнаççĕ. Пурĕ 83 коммунист хаçат ĕçне хутшăннă. Колхоз председателĕсем 21 çын, стахановецсем 24 çын, учительсем 13 çын тата ыттисем те çыраççĕ.

Колхоз выльăх-чĕрлĕхне ĕрчетес ыйтусене сÿтсе явма пухнă канашлу

Февралĕн 7-мĕшĕнче Мускавра колхоз выльăх-чĕрлĕхне ĕрчетес ыйтусемпе канашлу уçăлнă. Канашлăва СССР Çĕрĕç Халăх Комиссариачĕ пухнă. Унта союзлă тата автономиллĕ республикăсен, крайсемпе облаçсен çĕрĕç органĕсен представителĕсем, ученăйсем, зоотехниксем, ветеринари врачĕсем пынă.

Çĕрĕç Халăх Комиссарĕн заместителĕ Чекменев юлташ 1944 çулта выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли государство планне мĕнле пурнăçа кĕртни çинчен тата 1945 çулта тĕрлĕ выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес тĕлĕшпе çĕрĕç органĕсем умĕнче тăракан задачăсем çинчен доклад туса панă. Хăйĕн докладĕнче вăл иртнĕ çулта колхозсемпе совхозсем тунă çитĕнÿсем çинчен чылай каланă.

Совет хресченĕсен патриотизмне пула, ирĕке тухнă районсенче выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçе ура çине тăратас тĕлĕшпе те нумай ĕçленĕ.

1945 çулхи план тăрăх, пур йышши выльăхсен тата кайăк-кешĕксен хисепне татах та ÿстермелле, выльăх апачĕн никĕсне тата ытларах лайăхлатмалла. Плана кăтартнă ĕçсене пурнăçа кĕртес тĕлĕшпе докладчик татăклă мерăсем сĕннĕ.

Канашлу çавăн пекех Казах ССР-ĕн Çĕрĕç Халăх Комиссарĕн заместителĕ Богданов юлташ, Украина ССР-ĕн Наркомземĕн выльăх-чĕрлĕх управленийĕн начальникĕ Смолько юлташ тата Азербайджан ССР-ĕн Наркомземĕн лашасем ĕрчетессипе ĕçлекен управлени начальникĕ Эфендиев юлташ тунă содокладсене итленĕ.

Докладсем тăрăх прениссем пуçланнă. (ТАСС).

Пĕтĕм тĕнчери профсоюзсен Лондонри конференцийĕнче

ЛОНДОН, февралĕн 7-мĕшĕ. (ТАСС). Ĕнер пĕтĕм тĕнчери профсоюзсен конференцийĕнче касхи ларура союзниксене вăрçă ĕçĕнче пулăшас ыйтăва сÿтсе-явма пуçланă. Çак ыйтупа чи малтан совет делегацийĕн пуçлăхĕ Кузнецов юлташ сăмах тухса каланă. Кузнецов юлташа конференци вăйлăн алă çупса кĕтсе илнĕ. Кузнецов юлташ вырăсла 40 минут каланă. Унтан унăн сăмахне тĕрлĕ делегацисем валли куçарса панă.

Кузнецов юлташ хыççăн Британири тред-юнионсен конгресĕн представителĕ Артур Дикин сăмах каланă. Вăл Англири рабочи класс вăрçă ĕçĕсене мĕнле пулăшни çинчен каланă.

ЛОНДОН, февралĕн 8-мĕшĕ. (ТАСС). Ĕнер пĕтĕм тĕнчери профсоюзсен конференцийĕнче союзниксен малашне тумалли вăрçă ĕçĕсем çинчен сÿтсе-явнă.

Чи малтан производствăллă профсоюзсен конгресĕн (КПП) вице-председателĕ Робинсон сăмах тухса каланă. Хăйĕн сăмахĕнче вăл конференци делегачĕсене КПП ячĕпе саламланă. США-ри темиçе миллион рабочи производствăра мĕнле çитĕнÿсем туни çинчен пĕлтерсе, Робинсон çапла каланă: «Германипе Японие вăрçăра аркатса тăкнипе пĕр вăхăтрах пирĕнпе сирĕн пур ыйтусем те татăлĕç тесе шутлама эпир çав тери айван мар. Пĕрлешÿллĕ нацисем пĕр-пĕрне тавлашса кайĕç тесе шанни, çĕнтерÿ патне çывăхарах та çывăхарах илсе пыракан пĕрлĕх вырăнне пĕр-пĕрин çине шанмани, харкашу тата пĕр-пĕринчен уйăрăлса кайни килсе тухĕ тесе шанни фашизмăн юлашки ĕмĕчĕ пулать. Пĕтĕм тĕнчери профсоюзсен йĕркеллĕ пĕрлĕхĕ (эпир ăна халь çакăнта туса хума тăрăшатпăр) пĕрлешÿллĕ нацисене çĕнтерÿ хыççăн та хальхи пекех пĕрлештерсе тăракан меслет пулса тăмалла. Вăл çĕнтерÿ ĕнтĕ çывăхарсах килет.

Робинсон хыççăн Англи премьер-министрĕн заместителĕ Эттли сăмах тухса каланă. Конференцие Черчилль ячĕпе тата Англи правительстви ячĕпе саламласа, Эттли çакна палăртнă: пĕрлешÿллĕ нацисем çĕнĕ вăрçă ан пултăр тесе тăрăшнине пур çĕршывсенчи рабочисем те пулăшмалла.

Унтан Китай делегачĕ Чжу Сюэфань, Бельги делегачĕ Повель тата Франци делегачĕ Дютюи сăмахсем тухса каланă.

Дютюи тухса каланă хыççăн конференцире кунĕпех председатель пулса ĕçленĕ В. В. Кузнецов юлташ конференцин çĕнĕрен туса хунă организациллĕ комитечĕн секретарьне комитет ĕçĕсем çинчен доклад туса пама хушнă.

Организациллĕ комитетăн секретарĕ Торнтон (Австрали представителĕ) çапла каланă: организациллĕ комитет темиçе решени йышăнчĕ. Вĕсенчен хăшĕ-пĕрисем иртнĕ çулхи декабрь уйăхĕнче конференцие хатĕрлеме тунă комитет панă сĕнÿсене улăштараççĕ. Торнтон каланă тăрăх, организациллĕ комитета Франци делегацийĕ тата ытти делегацисем те Румынири, Болгарири, Финляндири тата Италири профсоюзсен ĕçĕсем çинчен çĕнĕрен каласа панă. Çакна пула комитет вăл çĕршывсенчи профсоюзсене конференцие чĕнме сĕнет. Организациллĕ комитет çавăн пекех тата Польшăн ирĕке кăларнă территорийĕнчи профсоюзсене те чĕнме сĕнет.

Кунсăр пуçне, комитет çапла тума сĕнет: пĕтĕм тĕнчери конференцин решенийĕсене пурте килĕшнĕ тăрăх кăна мар йышăнмалла, вĕсене сасăласа йышăнмалла, нациллĕ кашни делегаци вара пĕр единица шутланмалла. Решени законлă пултăр тесен, ăна пур нациллĕ делегацисен виççĕ пайĕнчен икĕ пайĕ йышăнмалла. Йышăнма килĕшмен виççĕмĕш пайĕ профсоюзсен пур делегачĕсен виççĕмĕш пайĕнчи ытларах делегата пĕрлештерсе тăрать пулсан, ыйтăва малалла сÿтсе-явмалла. Нациллĕ виççĕ е ытларах делегаци ыйтать пулсан, ыйтусене кашнинчех сасăлама лартмалла. Сасăлас пирки организациллĕ комитет çавăн пек сĕннĕ ĕнтĕ.

Çавăн пекех Торнтон мир тăвас ыйтупа ĕçлекен комитета 14 членран, пĕтĕм тĕнчери конференци ыйтăвĕсемпе ĕçлекен комитета 11 членран, профсоюзсен вăрçă хыççăнах лартмалли требованийĕсене тăвас ĕçпе комитета 7 членран тума сĕннĕ.

Çакăн хыççăн Ситрин сăмах тухса каланă. Англи делегацийĕ, тенĕ вăл, тăшмапла çĕршыва пулнă çĕршывсенчи профсоюзсене конференцие чĕнессине хирĕç тăрать. Люблин профсоюзĕсем хăйсен представителĕсене ярассине те хирĕç, каланă вăл.

Пурте килĕннипе мĕнле пĕлмелли çинчен Ситрин çапла каланă: «Конференци консультаци паракан тата канашлакан орган çеç пулмалли çинчен эпир малтанах каланăччĕ. Çак конференцире ыйтусене сасăламалла марри çинчен те каланăччĕ. Хальхи вăхăтра эпир решенисене сасăласа йышăнассине курса тăратпăр. «Организациллĕ комитет кăларса тăратнă ыйтăва конференцие вăйпах йышăнтармĕç», тесе шанатăп, тенĕ Ситрин.

Çавăн пекех Ситрин профсоюзсен вăрçă хыççăнхи требованийĕсем пирки комитет тăвассине те хирĕçленĕ.

Юлашкинчен Ситрин çапла каланă: «Организациллĕ комитета эпĕ хăйĕн докладне каялла илме чĕнетĕп», тенĕ.

ЧЕРЧИЛЛЬ СЕКРЕТАРИАЧĔН СОТРУДНИКĔСЕМ ВĔÇСЕ ПЫНĂ САМОЛЕТ ÇĔМĔРĔЛНИ

ЛОНДОН, февралĕн 8-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Лондонра официальнăй йĕркепе çапла пĕлтернĕ: Черчилль секретариачĕн союзлă виççĕ держава руководителĕсен конференцине кайма тухнă сотрудникĕсем ларса пынă самолет çĕмĕрĕлнĕ пирки 12 çын вилнĕ, 5 çын пĕр хыпарсăр çухалнă, вĕсене те вилнĕ пуль тесе шутлаççĕ. 5 çын аманнă. Катастрофа февралĕн 1-мĕшĕнче пулнă. Вилнисем хушшинче—ют çĕршыв ĕçĕсен министерствин 6 сотрудникĕ, вăл шутра пĕр хĕрарăм, çар министерствин сотрудникĕсем пулса тăракан 4 офицер тата пĕр офицерпа тепĕр летчик. Самолет командирĕнчен 4 çын пĕр хыпарсăр çухалнă.

Берлинри лару-тăру

СТОКГОЛЬМ, февралĕн 8-мĕшĕ. (ТАСС). «Свенска дагбладет» хаçатăн Берлинри корреспонденчĕ пĕлтернĕ тăрăх, Берлинра çынсем хăраса ÿкни ÿссех пырать. Гитлерла влаçсем хăрушă хыпар сарнине чарма хăтланни ахалех пулать. Германин хĕвелтухăç районĕсенчен пыракан беженецсем хулари йĕркесĕрлĕхе ÿстерсе пыраççĕ. Хулара çĕр кăмрăкĕ çук. Электричество вăхăтран вăхăта кăна параççĕ. Апат-çимĕç ыйтăвĕ çав тери япăх. Магазинсем пуш-пушах. Вăрттăн сутакансенчен сайра хутра çеç çĕрулми е кăшман тупса илме пулать.

Хĕвеланăç Европăри вăрçă ĕçĕсем

ЛОНДОН, февралĕн 8-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен экспедициллĕ вăйĕсен верховнăй командованийĕн штабĕ пичетлесе кăларнă пĕлтерÿре çапла каланă: Шмидт районĕнче союзниксем юлашки виçĕ кун хушшинче тăшманăн 159 дзотне тытса илнĕ. Шлейденран кăнтăр-хĕвеланăçнерехре союзниксен çарĕсем темиçе кун хушши урамсенче çапăçнă, тăшман вăйлăн хирĕç тăнине çĕнтерсе, ăна Хеллентальхулинчен сирпĕтсе кăларнă. Прюм районĕнче союзниксен пехоти Вашейда çитнĕ. Монтхейм, Холльнч тата Зеллерих союзниксен аллинче.

Темиçе тĕлте союзниксен çарĕсем Ур тата Сюр шывĕсем урлă каçма пуçланă. Рейнихран кăнтăр-хĕвелтухăçнерехре союзниксем Зинц хулине йышăннă.

Лотарингири Саарсемюндран хĕвелтухăçнерехре тăшман пехотин атакине сирсе янă. Союзниксен çарĕсем Бишольц патне пырса çитнĕ (Гардт тăвĕсенчен хĕвелтухăçнерехре). Анатри Эльзас тÿремĕнче союзниксен çарĕсем темиçе яла ирĕке кăларнă. Рейнпа Рона каналĕн хĕвеланăç сыранне пĕтĕмпех тăшмантан тасатнă. Вогез тăвĕсенче тăшман хирĕç тăрса çапăçнине пусарса лартнă. Тăшманăн пĕр-пĕринчен уйăрăлса кайнă ушкăнĕсене пĕтерсе пынă. Февралĕн 5-мĕшĕнче союзниксен çарĕсем хĕвеланăç фронтĕнче 2.905 çынна тыткăна илнĕ.

Пысăк бомбардировщиксем, истребительсем хÿтĕлесе пынипе, Хĕвеланăç Германири тăшман объекчĕсене тапăннă.

США-ра ПРЕДСТАВИТЕЛЬСЕН ПАЛАТИ ĔÇ ВĂЙНЕ МОБИЛИЗАЦИЛЕМЕЛЛИ ЗАКОНОПРОЕКТА ЫРЛАНĂ

ВАШИНГТОН, февралĕн 5-мĕшĕ. (ТАСС). США-ра представительсен палати 81 сасăпа законопроект йышăннă та сената тăратнă. Вăл законопроект тăрăх, вырăнти мобилизаци органĕсем 18 çултан пуçласа 45 çула çитнĕ арçынсене çар промышленноçĕнче ĕçлеме мобилизацилеме пултараççĕ. Мобилизациленекен органсен распоряженийĕсене пурнăçа кĕртме килĕшмен çынсене е çар предприятийĕсенчен хăйсен ирĕкĕпе пăрахса каякан çынсене штраф тÿлеттерессĕ е 5 çула çити тĕрмене хупассĕ. Кирлĕ пулсан, пĕр вăхăтрах штраф тÿлеттерме те, хупса лартма та пултараççĕ. Вăл законопроекта Рузвельт, хăй сĕннĕ анлă законсен пĕр пайĕ вырăнне хурса, ырланă.

Вăл законопроекта 4 кун хушши сÿтсе явнă. Çав вăхăтра палата вăл законопроекта тÿрлетме сĕнчисене сире-сире янă. Вăл сĕнÿсене законопроекта хавшатас шутпа панă. Палата сирсе янă çав сĕнÿсем хушшинче законопроекта «ирĕклĕ йĕркепе» тумалли ĕçсен планĕпе улăштарма сĕнни те пулнă. Çак юлашки сĕнĕве 10 сасă ытларах панипе кăна сирсе янă.

ТАННЕРА СЕЙМ ДЕПУТАТĔНЧЕН КĂЛАРНĂ

ХЕЛЬСИНКИ, февралĕн 8-мĕшĕ. (ТАСС). Февралĕн 6-мĕшĕнче Финлянди сеймĕн ларăвĕнче Таннерăн хăйне сейм депутатĕнчен кăларма ыйтса панă заявленине пăхса тухнă. Хăй мĕншĕн çавăн пек тума ыйтнине Таннер «сейма паллă политикăллă сăлтавсемпе» ăнлантарса панă. Председатель çапла каланă: сейм президиумĕ Таннер ыйтнипе килĕшме сĕнет, тенĕ. Вара сейм ним сÿтсе-явмасăрах çав сĕнĕве йышăннă та Таннер лару залĕнчен тухса кайнă.

Чаканар ял Совечĕн ĕçĕсем

Ишлей районĕнчи Чаканар ял Совечĕ 1944 çулта хуçалăхпа культура ĕçĕнче чылай пысăк çитĕнÿсем турĕ.

Ял Совет территорийĕнчи «Верный путь» тата «Ырашпулăх» колхозсем ялхуçалăх ĕçĕсене вăхăтра тата пысăк пахалăхпа туса ирттерчĕç, тĕштырăсем кашни гектартан 13—15 центнер, çĕрулми 100 центнер туса илчĕç. Ял Советне кĕрекен колхозсем государство умĕнчи парăмсене срокчен парса татнă тата планран ирттерсе Хĕрлĕ Çар фондне 1250 пăт тĕштырă, 760 центнер аш-какай панă. Вĕсем выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли плана та пурнăçа кĕртнĕ.

Ялхуçалăхĕнче ăнăçлă ĕçленипе пĕрлех Чаканар ял Совечĕ промышленноçпа транспорт валли те ĕç вăйĕ кирлĕ таран тата вăхăтра парса тăрать, 1944 çулхи финанс планне те ирттерсе тултарчĕ.

Чаканара пынă чухне çакна куратăн: ял Совет территорийĕнче кĕперсем, çулсем юсавлă та çĕнĕ. Яла кĕрен—урамсем таса та йĕркеллĕ. Çуртсене юсанă, тирпейленĕ.

Чаканар ялĕнче пуçламĕш шкул пур. Ял Совечĕпе колхоз шкула куллен пулăшса тăраççĕ. Иртнĕ çулла шкул çуртне çĕнетсе юсаттарчĕç. Халĕ унта таса та çутă, вутă хĕл каçма çителĕклĕ хатĕрлесе хунă.

Чаканар ял Совечĕ фронтовиксен çемьисене пулăшас тĕлĕшпе те лайăх ĕçлет. Фронтовиксен çемьисене 1,7 тонна тĕштырă парса пулăшнă. Тăлăх ачасемпе Отечественнăй вăрçă инвалидĕсене кăçал 320 кубометр вутă турттарса панă, вĕсене пулăшма 40 килограмм çăм, 65 тир пухнă.

Ял Совет çумĕнче тĕрлĕ комиссисем лайăх ĕçлеççĕ. Вăл комиссисене активлă колхозниксемпе колхозницăсене анлăн явăçтарнă.

Чаканар ял Совечĕ, 1945 çулта тата лайăхрах ĕçлесе, Чăваш АССР Верховнăй Совет Президиумĕ лайăх ĕçлекен ял Советне паракан куçса çÿрекен Хĕрлĕ Ялава илме тивĕçлĕ пулассишĕн тăрăшать.

П. АРБАТОВ.

КИРГИЗИРЕ ХИРСЕНЕ ШĂВАРМАЛЛИ КАНАЛСЕМ ЧАВАÇÇĔ

Киргизире хирсене шăвармалли пысăк каналсем чавас ĕç вĕçленсе пырать. Çав шутра 250 километр тăршшĕ тĕп канал чаваççĕ. Вĕсене туса пĕтерни çуркуннех анмалли 5,5 пин гектар çĕре шывпа шăварма май парать. Кăçалхи çул вĕçлениччен тата 15.000 гектар çĕр акма юрăхлă пулать.

Республикăра 20 ытла тĕп канал тата пĕчĕкрех каналсем тăваççĕ. Пур ĕçсене те халăх тăвать. Вăл ĕçсене халĕ 10.000 колхозникпе колхозницăна яхăн хутшăннă.

СТАЛИНЛА СТИПЕНДИАТСЕМ

СССР-ти Наука академийĕн президиумĕ тата СССР Совнаркомĕ çумĕнчи Аслă шкулсен комитечĕ научнăй работниксен пĕр ушкăнне Сталин юлташ ячĕпе паракан стипендисем памалла тунă. Сталинла стипендисене халĕ мĕн пурĕ 138 çын илсе тăрать. Вĕсем наукăсен докторĕ е кандидачĕ степеньне илме диссертацисем хатĕрлеççĕ. Диссертацисен темисене тата вĕсене хăçан çырса пĕтермелли срокĕсене çирĕплетнĕ.

Сталинла стипендисене илекенсем çĕршыври паллă ученăйсем—академиксем, Наука академийĕн член-корреспонденчĕсем, профессорсем тата аслă шкулсен преподавателĕсем—ертсе пынипе ĕçлеççĕ.

(ТАСС).

Паян Будăра

Будапешт урамĕсем ансăр та кукăр-макăр. Пĕр тăват кĕтеслĕ квартал та çук. Çавракă, çурма çавракă, пилĕк кĕтеслĕ, виçĕ кĕтеслĕ кварталсем çеç пур... Мĕншĕн капла пулни паллă: хула тусемпе сăртсем çинче вырнаçса ларнă. Пештри кварталсемпе танлаштарсан, Будăри кварталсем çÿллĕ вырăнта лараççĕ, кивĕ чиркÿсен, двоpецсен, замоксен йышлă башнисемпе шпилĕсем çав кварталсене тата çÿлерех çĕклеме тăрăшнă пек туйăнать...

Анчах Буда çÿлелле çеç хăпарман, вăл çĕр айнелле те аннă. Хулан Дунай шывĕ хĕррипчи пайĕнче кивĕ крепоçсен çĕр айĕнче тунă çулсемпе пÿлĕмсем нумай. Çĕр айĕнче халь тунă çуртсем вĕсенчен вара ирттереççĕ. Тăшмантан тасатнă кварталсенче эпир çĕр айĕнче танксем пухса кăларакан питĕ пысăк завод куртăмăр, унăн цехĕсенче темиçе пин станок пур. Çĕр айĕнчех авиаци заводĕ тунă. Çĕр айĕнчех тем пысăкăш складсем пур, вĕсенчен япаласем илсе тухма лифтсем, рельсăллă çулсем тунă. Пурăнакан çуртсем вырнаçнă кварталсем айĕнче те эпир бомбоубежищĕсен кварталĕсене куртăмăр, бомбоубежищĕсенчен унта казармăсем, столовăйсем, ресторансем тунă, намăс çурчĕсем те тунă.

Ун пек хула урăх тупма хĕн. Унта хула вырăнĕ, унăн планĕ, çуртсен форми—пурте нумай вăхăт хушши хÿтĕлеме май параççĕ. Нимĕçсем, хăйсене йĕри-тавра çавăрса илнĕ ункă ăшĕнче çапăçма йышăнса, çав условисене, паллах ĕнтĕ, шута илнĕ. Анчах вĕсем ак мĕн тĕлĕшпе йăнăшнă: совет офицерĕсемпе салтакĕсем Будапешта кучухнехи çапăçу техники питĕ нумай илсе пынă çеç мар, вĕсем унта тата урамсенче çапăçнин опытне те илсе пынă. Халь Будапешт урамĕсенче çапăçаканнисенчен нумайĕшĕ унччен Сталинградра, Мелитопольте, Одессăра, Белградра çапăçнă.

Темиçе кун каярах çеç гитлеровецсен аллинче Будăн чылай пысăк пайĕ пулнă. Паян вĕсене Дунай шывĕ çумне çур ункă ăшне хĕстерсе лартнă. Дунай леш енчен вĕсене тупăсемпе, пулеметсемпе переççĕ. Баррикадăсемпе мина хирĕсем хыçĕнче, чул çуртсен стенисем хыçĕнче пытанса, гитлеровецсем хăйсене аяккан килсе пулăшасса кĕтсе тăраççĕ. Анчах та Будапешт патне кăнтăр енчен пыма хăтланнă танковăй дивизисене хуларан нумай инçере чарса лартнă, чарса лартнă çеç мар, вĕсен пысăк пайне пĕтерсе тăкнă. Хальхи вăхăтра Будăра тăракан нимĕçсем вĕсем—вилме хатĕрленнĕ çынсем. Вĕсем сайра-хутран çеç тыткăна парăнаççĕ, вĕсем вĕçне çитиччен тытăнса тăраççĕ, кашни урама, кашни çурта, кашни туннеле, кашни баррикадăна пуçсăрланса хÿтĕлеççĕ. Анчах совет чаçĕсем вĕсене хĕснеçемĕн хĕссе пыраççĕ. «Нальсамбат» ятлă урамри пысăк сăрă çурт ĕнер çеç нимĕçсен аллинчеччĕ. Çав çÿллĕ çурт чÿречисенчен тăшман темиçе урама, темиçе килкартине, темиçе алăка курса, персе тăнă. Паян çав çурт ĕнтĕ пирĕн подразделенисен хыçне тăрса юлчĕ. Ăна гитлеровецсенчен тасатнă гвардеецсем паян унтан километр çурăра баррикадăсем çинче çапăçаççĕ.

Совет офицерĕсем маневрсем тума вĕренчĕç. Çав маневрсене пула, хăш чухне сахал вăйпах пĕтĕм кварталсенех тытса илме пулать. Эпир Будăн çурçĕр пайĕнче, картографи институчĕн, пир-авăр фабрикин, табакпа папирос фабрикин тăшмантан куçмаях пулмасть тасатнă çурчĕсенче пултăмăр. Будăн кăнтăр пайĕпе çурçĕр пайĕнче темиçе арман, темиçе пекарня ĕçлеççĕ те ĕнтĕ. Вырăнти çынсем Хĕрлĕ Çар хăйсен кварталне нимĕçсенчен тасатсанах хÿтлĕхĕсенчен тухаççĕ. Венгри правительстви Совет Союзĕпе перемири пирки килĕшÿ туни çинчен савăнса итлеççĕ. Вĕсенчен нумайĕшĕ савăнтах ĕçе тытăнаççĕ: урамсене вилĕсенчен, чулсенчен, кленче ванчăкĕсенчен тасатаççĕ, баррикадăсене сÿтеççĕ.

А. МАЛИБАШЕВ.

БУДАПЕШТ, февралĕн 6-мĕшĕ. (ТАСС спецкорĕ).

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, заместительпе секретарĕн — 4—26, парти пурнăç пайĕн 3—97, промышленность пайĕн — 3—99, ялхуçалăх пайĕн — 5—31, издательство конторин — 0—23.

НТ 00274 Типография № 1, Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР Заказ № 2. Тираж 16.000